Артелина З.Г. «Эх, Хушӑлка пысӑк та!» : [асаилӳсем] / Я. Ухсай çырса илнӗ // Константин Иванова аса илеççӗ. – Шупашкар, 1990. – С. 145.

*З. Г. АРТЕЛИНА*

**«ЭХ, ХУШАЛКА ПЫСӐК ТА!»**

Кӗçтенттин пирӗн пата эпӗ 22 çулта чух, çимӗк кунӗ килсе, пӗр эрне пурӑнса кайрӗ. Ун чухне вӑл Чӗмпӗрте веренетчӗ, ман шӑллӑм — Хусанта. Çавӑнпа та вӗсем пӗрперинпе туслӑ пурӑнни çинчен калаçатчӗç.

Кӗçтенттин вӑййа тухса çамрӑксемпе питех хутшӑнмастчӗ, анчах юррисене тимлесе итлетчӗ. Ушкӑнпа юрлакан юрӑсем пӗтсенех кӗретчӗ. «Юррисем питӗ лайӑх, анӑравлӑ, хӑшпӗрисене çырса илесчӗ-ха»,— тетчӗ вӑл часласах.

Кӑнтӑрла Кӗсле ту çине, Пысӑк вар пуçне кайса çӳренине, урам хушшине тухкаласа кӗнине астӑватӑп. «Эх, прӗн Хушӑлка пысӑк та!»— тетчӗ вара.

Ман шӑллӑмпа пӗрле Мускалӗнчи (тутар ялӗ, Хушӑларан 9 çухрӑмра) пӗлӗшсем патне кайса килчӗç. Тутарла та лайӑх калаçатчӗ хӑй. Пелепейре пулса, сӑн та керттерчӗç. Вӗсем кӗнекесем çинчен анчах калаçатчӗç. Кӗçтенттин хӑйпе пӗрле темле хура хуплашкаллӑ кӗнеке е илсе килнӗччӗ. Анчах ятне астумастӑп. «Çак кӗнекене уласа тухсан, пурнӑçа питӗ пӗлекен çын пулатӑн»,— ерӗ вӑл пӗрре.

Пирӗн пахчара йӑмра, хӑва йывӑççем нумайччӗ. Кӗçенттин ирсеренех унта тухса çӳретчӗ, курӑк çине выртх тем çыратчӗ. Пирӗн çырмана çав тери юрататчӗ вара. Эпир шыв ӑсакан çӑл таврашне ӳкернӗ хутне пӳртех çакччӗ.

Пӗр ирхине вӑл пирӗн кушак шӑпчӑк тытса килнине урнӑ та: «Çинук аппа, сирӗн кушака кӑкарас пулать, л илемлӗ кайӑксене тытать»,— терӗ. Чӑнах та, кушаа шалти пӳлӗме кӑкарчӗç, вара Кӗçтенттин кайиччен те лармарӗç.

Мӑнтарӑн ачи... Унӑн уçӑ калаçӑвӗ, кулли, илемлӗ пӳйӗ, уçӑларах тӑракан тути халӗ те куç умӗнчех-ха.

1955

*И. В. Яковлев çырса илнӗ.*